# ЯКОВЛЕВ
# ИВАН ЯКОВЛЕВИЧ

### чăваш культурипе çутĕçĕн паллă ĕçченĕ, педагог-демократ, çыравçă*

1848 ç. ака уйăхĕн 13 (25)-мĕшĕнче хальхи Тутарстанăн Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкинче хресчен кил-йышĕнче çуралнă. 1930 ç. юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче вилнĕ, ăна Мускавра Ваганьково масарне пытарнă.

1875 ç. Хусан университечĕн историпе филологи факультетне пĕтернĕ. 1868 ç. Чĕмпĕрти чăваш шкулне уçнă (хăйĕн вăйĕпе тата уйрăм çынсем пулăшнипе). Ку шкула 1871 ç. И. Н. Ульянов хута кĕнипе патшалăх бюджетне кĕртнĕ. 1877 ç. ăна Чĕмпĕрти тĕп чăваш шкулĕ, 1890 ç. Чĕмпĕрти чăваш учителĕсем хатĕрлекен шкул ятне панă. Вăл чăваш культурин центрĕ пулса тăнă. Университетран вĕренсе тухнă хыççăн Яковлев 1903 çулччен Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕнче ĕçленĕ, 1919 çулччен Чăваш учителĕсем хатĕрлекен шкула ертсе пынă (ку шкула 1917 ç. учительсем хатĕрлекен семинари, 1919 ç. Чăваш педагогика 3 çуллăх курсĕ ятне панă). Яковлев Атăл тăрăхĕнче чăваш тата ытти халăх шкулĕсене уçма пулăшнă. Вăл чăваш шкулĕсем валли вĕрентӳ методикине çырса хатĕрленĕ, унта К. Д. Ушинскипе ун ĕçне тăсаканĕсен педагогика еткерĕпе пуçаруллăн усă курнă. XIX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче вырăс графикине тĕпе хурса çĕнĕ чăваш алфавичĕ йĕркеленĕ, букварьсемпе вĕренӳ кĕнекисем çырнă. Вулав кĕнекисене Яковлев халăх йăлийĕрки çинчен хайланă калавсене тата халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене кĕртнĕ, хăй те халăхăн илемлĕ сăмах пултарулăхне пухнă. Вăл пăхса-кăтартса тăнипе вырăс литературин классикĕсем (А. С. Пушкин, М. Ю. Лермонтов, И. А. Крылов, Л. Н. Толстой, Н. А. Некрасов т. ыт.) çырнисене куçарнă тĕслĕхсем, йышлă вулакан валли кăларнă ăслăлăх кĕнекисем чăваш литературин чĕлхине йĕркелеме тата наци литературине аталантарма, ăна вырăс культурипе çывăхланма пулăшнă.

* Пăхăр: БСЭ, 30 т. М., 1978. 485 с.

И. Я. Яковлев ертсе пынипе Библин иккӗмӗш пайне – Ҫӗнӗ Сăмаха чăвашла кăларнă. Вăл 1912 ç. Псалтырь тата пророксен хăш-пӗр кӗнекисене, 1918 ç. Моисей кӗнекисенчен тăваттăшне чăвашла пичетленӗ. Библин пӗрремӗш пайӗн – Кивӗ Сăмахăн ытти кӗнекисен куçарăвӗсем ал çыру халлӗн юлнă.

1958 ç. Чăваш патшалăх педагогика институтне Иван Яковлевич Яковлев ятне панă. Шупашкарта ăна асăнса палăк лартнă, асăну музейӗ уçнă, ун ячӗпе проспект хисепленет.